26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
24
ЭРНЕКУН
253(6490) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Нимĕçсен Невель хулинчен кăнтăртарахри вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татас тĕлĕшпе анăçлă операци ирттернĕ çĕрте çав операци вăхăтĕнче чапа тухнă çак соединенисемпе чăсcене наградăлама тăратас:

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ:

СВЕТЛЯКОВ полковникăн 166-мĕш стрелковăй дивизине,

ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн 83-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизине,

РЫЖИКОВ генерал-майорăн 16-мĕш Гвардейски Ленин орденлĕ Карачевски стрелковăй дивизине,

ХАЙДУКОВ полковникăн 159-мĕш танковăй бригадине,

КОРОЧКИН полковникăн 15-мĕш артиллери дивизине,

ЗАВЬЯЛОВ полковникăн 403-мĕш тупăллă артиллери полкне,

ДОРОХОВ подполковникăн 24-мĕш Гвардейски минометнăй полкне,

КУЧМА полковникăн 211-мĕш Невельски штурмовой авиаци дивизине,

КОЖЕМЯКИН полковникăн 308-мĕш штурмовой авиаци дивизине,

ПОЛЯКОВСКИЙ полковникăн 10-мĕш штурмовой инженери-сапер бригадине.

ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬ СУВОРОВ ОРДЕНĔПЕ:

ЧЕРНОВ полковникăн 47-мĕш Невельски стрелковăй дивизине,

ПЕТЕРС генерал-майорăн 84-мĕш Гвардейски Карачевски стрелковăй дивизине,

БРИКЕЛЬ полковникăн 6-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă кавалери дивизине,

КОРОТЕЕВ полковникăн 70-мĕш танковăй бригадине,

ЗАКЛЕБ подполковникăн 6-мĕш Гвардейски Московски штурмовой авиаци полкне.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1943 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Хĕрлĕ Çар соединенийĕсемпе чăçĕсене орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ:

166-мĕш стрелковăй дивизие
83-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие
16-мĕш Гвардейски Ленин орденлĕ Карачевски стрелковăй дивизие
15-мĕш артиллери дивизине
211-мĕш Невельски штурмовой авиаци дивизине
308-мĕш штурмовой авиаци дивизине
159-мĕш танковăй бригадăна
403-мĕш тупăллă артиллери полкне
24-мĕш Гвардейски минометнăй полка
10-мĕш штурмовой инженери-сапер бригадине

ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬ СУВОРОВ ОРДЕНĔПЕ:

47-мĕш Невельски стрелковăй дивизие
84-мĕш Гвардейски Карачевски стрелковăй дивизие
6-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă кавалери дивизине
70-мĕш танковăй бригадăна
6-мĕш Гвардейски Московски штурмовой авиаци полкне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1943-мĕш çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ.

Аслă совет державин гимнĕ

Союз нерушимый республик свободных
Сплотила навеки Великая Русь.
Да здравствует созданный волей народов,
Единый, могучий Советский Союз!

Çак чаплă сăмахсемпе пуçланать Совет Союзĕн çĕнĕ гимнĕ. Унпа эпир малашне хамăрăн социализмлă Тăван çĕршывăн чапне мухтавлăпăр. Совет Союзĕн государствăн хальхи гимнĕ — «Интернационал» хăйĕн содержанийĕпе пирĕн çĕршывра Совет стройĕ çĕнтернĕ пирки пулса иртнĕ тарăн улшăнусене тата Совет государствин социализмлă ăшчикне палăртса тăманнине кура, — ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Государство гимнĕн текстне çĕнĕ текстпа — хăйĕн содержанийĕпе совет стройĕн шухăш-кăмăлĕпе тата ăшчикĕпе килĕшсе тăракан текстпа улăштарма йышăннă. Çĕнĕ гимнăн текçчĕ пичетленсе тухрĕ, музыкин нотисене уйрăмăн пичетлесе кăлараççĕ.

Хальхи гимна — «Интернационала»—1871-мĕш çулта çырнă. «Интернационал» чĕрĕк ĕмĕр хушши пирĕн кĕрешĕвĕн официальнăй юррийĕ, Совет государствин гимнĕ пулса тăнă. Çак тапхăрта пирĕн çĕршыври пурнăç тĕпренех улшăнчĕ. ССР Союзĕнчи ĕççыннисем ун чухне тума ĕмĕтленнисем халĕ ĕнтĕ чăн-чăн пурнăçа кĕчĕç. Эпир çĕнĕ тĕнче—социализмлă общество, социализм системиллĕ хуçалăх турăмăр, этем этеме эксплоатацилессине пĕтерсе тăкрăмăр, халăхсен тăванла туслăхне çирĕплетрĕмĕр. Совет стройĕн çĕнтерĕвĕсем социализмлă совет государствин вăй-хăватне ӳстерчĕç, унăн шалти вăйĕсене çирĕплетрĕç, вăл тулашри тăшмансене хирĕç тăма пултарнине тĕреклетрĕç.

Çак çĕнтерӳсене Сталинла Конституци çине çырса хунă, вĕсем пурне те паллă ĕнтĕ. Анчах вĕсене, паллăх, темиçе вунă çул каярах çырса хатĕрленĕ гимнра палăртма май çук. Çавăн пирки çĕршывра пулса иртнĕ тарăн улшăнусем çинчен пуринчен малтан çĕнтерӳллĕ чаплă юрăра, официальнăй йĕркепе йышăннă юрăра, Совет Союзĕнчи халăхсен патриотла туйăмне сăвăпа тата музыкăпа палăртакан юрăра кăтартса пама тăрăшни питех те вырăнлă. Халĕ ĕнтĕ Государствăн çĕнĕ гимнĕн чаплă строфисем совет çыннисем ăйтнине чăннипех тивĕçтерсе тăраççĕ.

Славься, Отечество наше свободное,
Дружбы народов надежный оплот!
Знамя советское, знамя народное
Пусть от победы к победе ведет!

Çĕнĕ гимнăн текстĕнче совет патриочĕ хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене кăтартса панине, аслă Русь ĕмĕрлĕхех пĕтĕçтернĕ ирĕклĕ республикăсен никам çĕнтереймн союзĕн чапĕпе мухтавне курать, çав Русьăн нациллĕ чи лайăх традицийĕçене вырăс рабочи класĕ палăртса тăрать.

Аслă вырăс халăхĕ пирĕн государствăна тăвас тĕлĕшпе. ССР Союзĕнчи мĕнпур тăванлă халăхсене пĕр туслă çемьене пĕтĕçтерес тĕлĕшпе тунă паха ĕçĕ нихăçан та манăçа тухмĕ. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕрлешнĕ халăхсен туслăхне чаплăн ырă сунни ăруран ăрăва куçса пырĕ.

Вырăс рабочи класĕ большевиксен аслă партине — Ленин-Сталин партине турĕ, çав парти çĕршыври мĕнпур ĕççыннисене ертсе пырать. Парти пирĕн Тăван çĕршывăн вăйĕпе хăватне пăхса çитĕнтерчĕ, аслă Сталин халăха чунтан парăнса ĕçлекен деятельсен нумай миллионлă çарне пăхса ӳстерчĕ.

Сквозь грозы сияло нам солнце свободы,
И Ленин Великий нам путь озарил.
Нас вырастил Сталин — на верность народу,
На труд и на подвиги нас вдохновил.

Çакăн пек янăраса тăрĕ Совет государствине организацилекенсен, ăна никам çĕнми хăватлă туса хуракансен — Ленинпа Сталинăн çулĕпе паттăр ĕçсем тума малалла каякан совет çыннисен юрри. Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртсе пырса, аслă Сталин тавра пĕтĕçнĕ Совет Союзĕнчи халăхсем халĕ историре çав тери паттăр ĕç тăваççĕ, кашни совет çынни гимнăн чĕрене кĕрсе вырнаçакан çак сăмахĕсене калать:

Мы в битвах решаем судьбу поколений
Мы к славе Отчизну свою поведем!

Халĕ Совет Союзĕ чи малти вырăн, прогреслă вырăн йышăнса тăни пĕтĕм этемлĕхе нихăçанхинчен те уççăнрах курăнса тăрать. Вăл хăйĕн мĕнпур хăвачĕпе нимĕç захватчикĕсен çулне пӳлсе лартрĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тĕнче историйĕн çак чи паха тапхăрĕнче совет государствин çав тери пысăк вăй-хăватне палăртса тăракан çар пулса тăчĕ. Гимн сăмахĕсем совет халăхĕн кĕрешӳри ирĕкне, вăл хăй çарĕпе савăннине, вăл тăшмана çĕнтерессине шанса тăнине кăтартса параççĕ.

Мы армию нашу растили в сраженьях,
Захватчиков подлых с дороги сметем!

ССР Союзĕн Государство гимнĕнче кирек мĕнле захватчиксене те, пирĕн Тăван çĕршывăн таса çĕрне хапсăнакан скерсене, унăн чиккисене тĕкĕнме пăхакан скерсене, хăйĕн çулĕ çинчен шăлса ыватма хатĕр тăни курăнса тăрать. Совет Союзĕн государство çĕнĕ гимнĕ — пирĕн ирĕклĕ çĕршывăн чапĕпе хăватне, туслăхăн шанчăклă тĕрекне, совет çыннисен телейĕпе мухтавне тивĕçлипех палăртса тăрать.

Çĕнĕ гимн (унăн текстне Сергей Михалковпа Эль-Регистан, музыкине — А. Александров композитор çырнă) пирĕн историллĕ пурнăçăн паллă тапхăрĕнче пичетленсе тухрĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан хальхи йывăр та юнлă кĕрешӳре Совет государстви шăпах çак гимнăн строфисенче кăтартса панă аслă вăйсене пула çĕнтерӳ патнелле çирĕппĕн, шанчăклăн пырать те ĕнтĕ. Пĕтĕм çĕршыв халĕ тăшмана хирĕç калама çук вăйлăн кĕрешет. Çĕнтерӳ сехечĕ çывхарса килет. Вăрçăри çак татăклă ĕççен тапхăрĕнче совет халăхĕ хăйĕн аслă ĕçĕ çĕнтерессине мухтаса юрламалли çĕнĕ юрă хывать.

Хаяр çапăçусенче шăранса тухнă çĕнĕ гимн аслă та хăватлă **Совет Союзĕн чапне ĕмĕрлĕхе мухтакан юрă** пулса тăрĕ. Çак чаплă сăмахсем пирĕн çĕр çинче янлăн та хăватлăн янăраса тăччăр:

Славься, Отечество наше свободное,
Счастья народов надежный оплот!
Знамя советское, знамя народное.
Пусть от победы к победе ведет!

ССР Союзĕнчи халăхсем çак чаплă сăмахсене мĕнпур йывăрлăхсем витĕр илсе тухчăр, çак сăмахсене вĕсем малашнехи ăрусене каласа хăварччăр!

(**«Известия», декабрĕн 21-мĕшĕнчи умстатья**).

ХРОНИКА

СССР Совнаркомĕ 1944-мĕш çулхи январĕн 2-мĕшĕнчи вырсарникун вырăнне 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнчи шăматкун канмалла тунă.

Нацисе йăла условийĕсене кура эрнекун канакан союзлă тата автономлă республикăсенче 1943-мĕш çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчи эрнекун вырăнне 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнчи шăматкун канмалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 21-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра — РОСЛЯКИ, ВАРХИ, БЕСКАТОВО, ХОМЕНКИ, СМОЛОВКА, ЧИСТОПОЛЬЕ, ЗАГУЗЬЕ, КОЗЛОВИЧИ, ШУТНИЦА, КОСОЛАПЫ, ЛУЖАНЫ, БУХАРЕВО, ВОКШЕВО, ГРИБАЛИ ятлă ялсене тата РОСЛЯКИ ятлă чугун çул станцине.

ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене анăçлăн сирсе янă.

КОРОСТЕНЬ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен вăйлă атакисене пурне те анăçлăн сирсе янă, ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

КИРОВОГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире янă.

ХЕРСОН районĕнче пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сулахай енче нимĕçсен кĕпер умĕнчи укрепленине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳснĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 112 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

ДЕКАБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 22-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, 20 ял ытла тытса илнĕ, çав шутра — ВЕРТЕЯ, БУРАКОВО, КОЗЫРЕВО, СЮБОРОВКА, РУДНЯ ятлă ялсем.

ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене анăçлăн сирсе янă, ăна, уйрăмах танксем тĕлĕшпе, пысăк çухату тӳстернĕ.

КОРОСТЕНЬ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотине танкĕсен йышлă вăйĕсен атакисене пурне те анăçлăн сирсе янă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

КИРОВОГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене анăçлăн сирсе янă, ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 148 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 45-шне ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, 50-шне — КОРОСТЕНЬ районĕнче.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕç оборонин темиçе опорнăй пунктне тытса илнĕ. Çав çапăçура гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсен 3 артиллери батарейине, 11 миномете тата 32 пулемете пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра нимĕç пехоти, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пулăшса пынипе, умлăн-хыçлăн 16 хутчен контратака тунă. Тăшманăн мĕнпур контратакисене, ăна пысăк çухатусем тӳстерсе, сирсе янă. Нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 3 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппине персе çĕмĕрнĕ. Каялла чакакан тăшмана хыçранах хăваласа пырса, пирĕн çарсем темиçе ял тытса илнĕ.

* * *

Жлобин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çĕр каçах тăшман танкĕсемпе пехотин уйрăм ушкăнĕсен атакисене сирсе тăнă. Ирхине нимĕçсем фронтăн ансăр участокĕнче çапăçăва пехотăн икĕ дивизине тата 100 танк ытла кĕртсе янă. Хĕрӳллĕ çапăçу пуçланса кайнă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсем тата бронебойщиксем хăйсен позицийĕсене аларан вĕçертмен, тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ. Анăççăр атакăсенче тăшманăн 1.800 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Пирĕннисем нимĕçсен 45 танкне тата 8 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Коростень хули районĕнче нимĕçсен танкĕсемпе пехотин йышлă вăйĕсем ирхине ирех пирĕн позицисене атакăланă. Виçĕ сехет хушши çапăçнă хыççăн тăшман халăх пурăнакан пĕр пункта вăркăнса кĕрсе кайнă. Унтан пирĕн çарсем контратака тунă та нимĕçсене каялла хăваласа янă. Совет танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписем вара тăшмана аркатса тăкас ĕçе вĕçленĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çунса кайнă 43 танкĕ ларса юлнă, гитлеровецсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, анăçлă маневр туса, питĕ паха позицисене йышăнса илнĕ. Çавăн чухне 600 гитлеровеца вĕлернĕ, тăшманăн 7 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кировоград хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман атакисене анăçлăн сире-сире янă. Пĕр районра нимĕçсем танксен йышлă вăйĕсене темиçе хут та çапăçăва кĕртсе янă. Пĕр гвардейски соединенин артиллерисчĕсем тăшман танкĕсен атакисене сирсе янă. Кун каçиччен вĕсем нимĕçсен 18 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 7 туппине тата 5 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем малтан совет çарĕсем тăракан вырăна сăвăланса кĕнĕ. Унтан пирĕн боецсем тăшманăн шала кĕрсе кайнă ушкăнне ытти çарĕсенчен татса илнĕ те, татăклăн пырса çапса, ăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Нимĕç автоматчикĕсен икĕ ротине, 7 танк тата 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ декабрĕн 7-мĕшĕнче тăшман çарĕсене турттарса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, пассажирсен 7 вагонĕ тата тавар тиекен 4 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнчен гитлеровецсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 виллине ытла туртса кăларнă. Украинăри партизансен Кармелюк ячĕпе тăракан отрядĕнчи разведчиксем нимĕçсен танкĕсемпе самолет моторĕсем тиенĕ эшелонĕ фронталла килнине пĕлнĕ. Партизансем тăшманăн чугун çул çинчи хуралне пĕр сас-чĕвĕсĕр вĕлернĕ те чугун çул çине минăсем лартса хăварнă. Нимĕçсен поезчĕ çав минăсем çине пырса кĕнĕ те, сирпĕнсе кайса, айкинелле йăванса кайнă. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем 50 сехет хушши çӳреме пултарайман.

* * *

Финсен 6-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 12-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Ойва Илмари Тауриайнен çапла каласа панă: «Мана çара мобилизацилерĕç. Çар ĕçне мана Рийхимяки тата Оулу хулисенчи вĕренӳ пункчĕсенче вĕрентрĕç. Оулу хулинче унта çара тин çеç илнĕ салтаксен батальонне вĕрентетчĕç. Хапуя лейтенант вăрçăри лару-тăру çинчен ятарласа икĕ заняти туса ирттерчĕ. Пĕрремĕш занятире вăл карта çинче фронт линине çырса кăтартрĕ, финсем тытса илнĕ совет территорине уйăрса хучĕ та çапла каларĕ: «Финн çарĕ çĕр сахал мар тытса илчĕ ĕнтĕ. Финсен задачи—пĕтĕм Карелие Хĕрлĕ Çартан тасатса, ăна Финлянди çумне хутăштарасси пулать. Вăрçă пĕтсен финн салтакĕсем Карелире пысăк çĕр участокĕсем тата вăрман участокĕсем илĕç», терĕ. Иккĕмĕш занятире лейтенант çапла каларĕ: «Эпир вырăс государствине пĕтерсе хурас тесе вăрçатпăр. Российйăна Германипе унăн союзникĕсем пайласа илĕç. Карели, Ленинград тата хăшпĕр ытти территорисем Финлянди аллине куçĕç», терĕ. Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче пирĕн батальона фронта кайма приказ пачĕç. Пирĕн вĕренӳ центрĕн командирĕ тата Оулу хулинчи гарнизонăн начальникĕ подполковник Матти Ранинен пире ăсатса янă чухне сăмах каларĕç. Вăл пире «аслă Финлянди» тăвассишĕн хамăр пурнăçа пама чĕнчĕ.

Финн салтакĕ çапла каланинче çĕнни нимĕн те çук. Пирĕн хаçатсенче Гитлерăн белофинн тарçисем совет çĕрĕсене тытса илсе Урала çитиччченех аслă Финлянди туса хурасси çинчен каланисене темиçе хут та пичетленĕ. Чăн та ĕнтĕ, юлашки вăхăтра, вăрçăра ĕçсем улшăннине пула, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсен фашистла çарĕсем поражениcем тӳснине пула, Финляндин власть пуçĕнче тăракан шайкки урăхларах калаçма пуçларĕ. Белофинсен пуçлăхĕсем, Гитлера сутăннăскерсем, халĕ кашни урамрах Финляндия «оборонăлла» вăрçă вăрçать, вăл ют çĕрсене тытса илме тăрăшмасть, тесе кăшкăраççĕ. Çав вăхăтрах финн офицерĕсем салтаксене финн пуçлăхĕсен чăн-чăн планĕсем çинчен каласа параççĕ. Пур ĕçре те гитлеровецсем пек тума хăтланса, финн офицерĕсем салтаксене Карели çĕрне тата Карели вăрманĕсене пама сăмах параççĕ. Ойва Илмари Тауриайнен калани çак енчен интереслă: вăл Гитлерăн, белофинн тарçисем суйнине тата вĕсен икĕ питлĕ ирсĕр политикине тăрă шыв çине кăларать.

Государствăна çĕрулми сутассине вăйлатмалла

Государствăна коопераци урлă çĕрулми сутмалли плана декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне республикăри 14 район—Сĕнтĕр, Елчĕк, Сĕнтĕрвăрри, Элĕк, Йĕпреç, Каваш, Куславкка, Комсомольски, Октябрьски, Вăрмар, Шупашкар, Шăхасан, Пăрачкав, Ишлей районĕсем пĕтĕмпех тултарнă. Сĕнтĕр районĕ çав плана 160 процент, Елчĕк районĕ 110 процент пурнăçланă.

Анчах ку ĕç хăшпĕр районсенче чăтма çук япăх пырать. Сăмахран, декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне Калинино районĕ 10 процент, Шăмăршă, Тăвай районĕсем 12-шер процент, Первомайскипе Советски районсем 44-шер процент кăна тултарнă.

Калас пулать, сутнă çĕрулмине илекен организацисем те калама çук япăх ĕçлеççĕ. Чăвашторгăн районсенчи отделенийĕсем 375 тонна йышăнас вырăнне 212,5 тонна çеç йышăннă. Чебторгăн хатĕрлев пункчĕсем 350 тонна вырăнне 46 тонна çеç йышăннă. Çĕрулми леçме пыракан колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе çырса яман, час-часах колхозниксем сутнă çĕрулмине ăçта леçмеллине те пĕлмеççĕ.

Сутнă çĕрулмине йышăнасси уйрăмах „Торгплодоовощьтрест" енĕпе питĕ япăх пырать. „Торгплодоовощьтрестăн" Вăрнарти конторн план тăрăх 250 тонна йышăнмалла пулсан, паянхи куна пурĕ те 51 тонна кăна йышăннă. „Торгплодоовощĕн" Етĕрнери уйрăмĕн управляющийĕ Жуковская юлташ та хăй ĕçне ăнăçлăн туса пымасть-ха. Çĕрулми сутнă колхозниксене ăнлантарса паман пирки, çĕрулмине çул çинчех шăнтса янă тĕслĕхсем те пулнă.

Государствăна сутнă çĕрулмине çак кунсенчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пĕтермелле.

200 пăт çĕрулми леçнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Кушарти Буденный ячĕпе тăракан колхоз государствăна коопераци урлă 350 пăт çĕрулми сутнă. Вăл шутран 200 пăтне хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Военнăй Трибунал приговорĕ—халăх приговорĕ

ШĂХАСАН, декабрĕн 23-мĕше. (**Телефонпа**). Военнăй Трибунал фашистла ирсĕрсене çакса вĕлермелле туни тата çав приговора пурнăçа кĕртни Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозăн членĕсене хытă савăнтарчĕ. Военнăй Трибунал приговорĕ—халăх приговорĕ, терĕç вĕсем. Ирсĕр тăшмана хăвăртрах таврăмашкăн Хĕрлĕ Çара тата вăйлăрах пулăшма пулчĕç.

— Эпĕ государствăна 77 пăт тырă сутрăм, халĕ тата пĕр центнер çĕрулми сутатăп,—терĕ тимĕрçĕ Е. Чернов.

Колхозниксем хăйсем сăмахне ĕçпе çирĕплетеççĕ. Декабрĕн 23-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче кăна хире 200 лав тислĕк кăларчĕç, 50 центнер вăрлăх сортларĕç, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç.

В. ВЕÇЕЛОВ

Çуракине большевикла хатĕрленер

Тракторсене лайăх юсарăмăр

ÇЕРПУ. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче манăн бригада кашни тракторпа 400 гектар çинчи ĕçсене турĕ, çунтармалли япаласем чылай перекетлерĕ. Çакă вăл йăлтах 1942 çулта кĕркунне тата иртнĕ хĕлте эпир, йывăрлăхсем умĕнче чарăнса тăмасăр, тракторсене юсама тимлĕн тăрăшни пулчĕ. Хамăр ĕçлекен тракторсене эпир, ытти бригадăсем пекех мар, çуракине çирĕп юсаса илсе тăрăмăр, тирпейлĕн тыткаласа тухăçлăн ĕçлерĕмĕр.

МТС кăçал тракторсемпе машинăсене юсама, иртнĕ çулхи пек мар, организованно тытăнчĕ. Мастерскойсенче ĕç условийĕ лайăх: ăшă, çутă. Тракторсене юсас ĕç бригадăллă-узловой меслетпе пулса пырать. Кашни тракторист машинăсене юсас тĕлĕшпе хăйне хушнă ĕçе тăрăшса тăвать.

Тракторсене тата çавăн пекех вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли ытти машинăсене юсама организациленĕ 6 бригадăран пĕринче бригадир пулса эпĕ ĕçлетĕп. Манăн бригада 1943 çулăн тăваттăмĕш кварталĕнче 8 трактор юсаса кăлармалла. Декабрĕн 14-мĕшĕ тĕлне эпир 6 трактор, вăл шутра—«СТЗ-НАТИ» маркăллă трактор пĕрре, урапаллă 5 трактор юсаса кăлартăмăр. Юсанă тракторсене комисси тĕплĕн пăхса йышăнчĕ, лайăх хак пачĕ. Ун чухне эпир тепĕр 3 тракторне юсаса пĕтерейменччĕ.

Тракторсене юсамалли тăваттăмĕш кварталти плана срокчен тултарас шухăшпа бригада ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пычĕ. Паянхи кун тĕлне татах виçĕ трактор юсаса кăлартăмăр. Çапла ĕнтĕ, эпир тăваттăмĕш кварталти плана срокчен, ирттерсе пурнăçларăмăр.

Çĕнĕ 1944-мĕш çула эпир çĕнĕ ÿсĕмсемпе кĕтсе илес тетпĕр. Январĕн 1-мĕшĕччен татах тепĕр трактор юсаса кăларма обязательство илтĕмĕр. Çак обязательствăна пурнăçлас тесе, халĕ эпир кашни кунах ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен ĕçлетпĕр. Тракторсене юсас ĕçре малта пынăшăн пирĕн бригада МТС-ăн куççа çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Хĕрлĕ ялава хамăр аларан вĕçертместпĕрех. Пĕтĕм вăйпа пултарулăха тракторсен паркне хăвăрт та тĕплĕн юсас ĕçе паратпăр.

Т. СТЕПАНОВ,
Тракторсем юсакан 6-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмалла

Сĕнтĕрвăрри районĕ кăçалхи иккĕмĕш çурçулта чугун çул транспортне вутă парса тăмалли плана пур районсенчен те маларах (хатĕрлес енĕпе 104,8 процент, турттарас енĕпе 106,7 процент) тултарчĕ. Вутă турттармалли плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне Йĕпреç районĕ 116,6 процент, Канаш районĕ 112,2 процент, Шăхасан районĕ 103,6 процент тата Ишлей районĕ 101,5 процент тултарчĕç. Вĕсем вутă хатĕрлес ĕçе те (Шăхасан—94,8 процент, Канаш—93,5 процент) чылай хăвăртлатма пултарнă.

Иртнĕ пилĕккунлăхра Первомайски район чугун çул транспортне вутă тăратмалли иккĕмĕш çурçулхи плана тултарас тĕлĕшпе—хатĕрлес енĕпе 5 процент, турттарас енĕпе 8,5 процент ÿсĕ пулчĕ. Çапах та декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăл район хатĕрлес енĕпе плана 94,3 процент, турттарас енĕпе—99,9 процент тултарнă. Çавăн пекех вутă хатĕрлес ĕçе Улатăр (94,1 процент), Йĕпреç (89,3 процент) районĕсем те хăвăртлатнă.

Анчах пĕтĕм республикипе илсен, чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес турттарас ĕç начар пулса пырать-ха. Иккĕмĕш çурçулти вутă хатĕрлемелли плана [illegible] кунсем кăна юлнă пулин те, нумай районсем, уйрăмах Кувакино (хатĕрлемелли плана 36,1 процент, турттармалли плана 17 процент тултарнă), Хĕрлĕ Чутай (хатĕрлемелли плана 45,7 проц., турттармалли плана 45,8 проц.), Чкаловски (турттармалли плана 48,4 проц., хатĕрлемелли плана 45,3 проц.), Октябрьски (турттармалли плана 59,6 проц., хатĕрлемелли плана 45,2 проц. тултарнă) районсем государствăн оборона тĕлĕшĕнчи çак питех те кирлĕ ĕçне вăхăтра туса пыма тăрăшмаççĕ. Çак районсенчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, ялсовечĕсемпе колхозсен председателĕсем чугун çул транспортне йĕркеллĕ ĕçлеттерме—тăшмана куллен-кун хĕвеланăçнелле хĕссе пыракан Хĕрлĕ Çар валли фронта хĕçпăшал, апат-çимĕç тата [illegible]

Малашне çакăн пек сÿрĕк ĕçлеме ниепле те чăтма çук. [illegible]

Хĕллехи кун кĕске. Çавăнпа [illegible]

Анчах çакă курăнмасть-ха. Чугун çул транспорчĕ умĕнче пысăк парăмпа юлнă Тăвай, Шăмăршă, Красноармейски, Çĕмĕрле, Элĕк, Советски, Етĕрне, Куславкка [illegible] ĕнтĕ асăннă районсем иртнĕ пилĕккунлăхра вутă турттарас ĕçре 4—5-шер процент, хатĕрлес ĕçре 5—6-шар процент çеç ÿсĕм турĕç. Кун пек хăвăртлăхпа ĕçлесен, паллах, вĕсем плана тултараймаççĕ. Плана тултармасăр юлма никама та ирĕк паман. Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçа кĕртес ĕçе чăрмантарса пыракансене ответ тыттарас пулать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсем

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ пулса кунта ялсовет исполкомĕн председателĕ Львов юлташ ĕçлет. Иртнĕ çулсенче парторганизацире пурĕ те 3—4 коммунист кăна пулнă. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче парторганизаци колхозсенчи малта пыракан çынсене 8 çынна парти ретне илнĕ.

Парторганизаци хăйĕн пĕтĕм ĕçне колхозсен кулленхи задачисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕллевпе туса пырать. Иртнĕ çулсенче ялсоветри «Новая сила» колхоз чылай ĕçсем енĕпе кая юлса пынă. Пуçламĕш парторганизаци çав колхоз мĕншĕн кая юлса пынине тишкĕрсе, колхоз ĕçĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Пухура колхоз председателĕ ответлăха туйса ĕçлеменни тата ертсе пырас ĕçе япăхтарни палăрнă. Пуху колхоз ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăннă. Çакăн хыççăн колхоз председателĕ пулма коммунист Ф. Семенов юлташа лартнă. Ăна пуçламĕш парторганизаци кулленех пулăшса пынă. Коммунистсем Дмитриев, Васильев тата ытти юлташсем колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса панă, юлашки хыпарсене пĕлтерсе тăнă. Çаксене пула колхоз халь хăйĕн ĕçне лайăхлатсах пырать.

Парторганизацинче коммунистсен пухăвĕсем йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Пĕр пухура фронта пулăшасси çинчен сÿтсе-явса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухма йышăннă пулнă. Çак решение пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кашни коммуниста уйрăм ĕçсем панă. Сăмахран, Семеновпа Васильев юлташсен ăшă япаласем пухас ĕçе «Новая сила» колхозра, Ивановпа Львов юлташсен—«Венера» колхозра, Филиппова юлташăн «Победа» колхозра организацилемелле пулнă. Коммунистсем хăйсене хушнă ĕçсене мĕнле туса пынине парторганизаци секретарĕ Львов юлташ куллен тĕрĕслесе тăнă, кирлĕ чухне пулăшу панă. Çакна пула ăшă япаласем пухасси ăнăçлăн иртнĕ. Ялсоветри колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли алшишсемпе чăлхасем кăна 250 мăшăр ярса панă.

Коммунистсем государствăна тырă сутнă тапхăрта ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса панă, государствăна тырă сутни çĕнтерÿ сехетне çывхартма пулăшни çинчен каласа пачĕç. Çавăнпа кунти колхозсем государствăна темиçе çĕр пăт тырă сутса, ăна çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леççе панă.

Ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухмалли 4-мĕш кварталти плана тахçанах тултарнă.

Парторганизацинчи коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене кружокра вĕренеççĕ. Кашни коммунист занятисене йĕркеллĕн çÿрет тата конспектсем çырать.

Халĕ пуçламĕш парторганизаци колхозниксене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме мобилизацилесе пырать.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Красноармейски район, Янчеллă ялĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенче

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатра пуринчен ытла комсомолецсемпе çамрăксем ĕçлеççĕ. Зимин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри комсомолецсемпе çамрăксен бригади ноябрь уйăхĕнче задание ытлашшипех тултарчĕ. Бригада членĕ комсомолка Ломтьева юлташ нормăна 243 процент, ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă Чалбаева—277 процент, Власова—186 процент, Павлова—183 процент, çамрăк рабочи Басирова—237 процент тултарчĕç.

Павлов юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра ноябрь уйăхĕнче комсомолецсемпе çамрăксенчен 10 бригада организациленĕ. Костино, Лобашова, Торганова, Маневич, Соляева, Рудакова комсомолкăсем ертсе пыракан бригадăсем пурте нормăна 150 процент ытларах тултарчĕç. Продукцисен пахалăхĕ те ÿсрĕ.

Çавăн пекех Назаров юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри бригадăсем те хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

К. ДМИТРИЕВ.

Вăрнар çамрăкĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă хыççăн

СĔНТĔР. декабрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн „Авангард" колхозри пуçламĕш организацийĕнче Вăрнар районĕнчи çамрăк колхозниксем гектартан 100 пăт тырă илессишĕн кĕрешме чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Çавăн хыççăн комсомолецсем 28 центнер кĕл, 6,5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 2 центнер фекали пухрĕç, уя 428 лав тислĕк кăларчĕç, ялхуçалăх машинисене юсама тытăнчĕç. ВЛКСМ организаци секретарĕ Снигкина юлташ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлесе, ыттисене пример парать.

Çавăн пекех пионерсемпе шкул ачисем те вăрнарсем чĕнсе калани не ĕçпе ответлеççĕ. Моска кассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионерсем, старши пионервожатăй Волкова юлташ ертсе пынипе, Горький ячĕпе тăракан колхозра 10 гектар синче юр тытрĕç.

Ф. АРТЕМЬЕВА

Фронтовиксем тав тăваççĕ

Чăвашсен Государство Издательстви фронтри хамăрăн землякçем патне Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине тата ытти кĕнекесем те ярса панă.

Нумай пулмасть фронтовиксенчен çыру килчĕ. Вĕсем хăйсене пулăшнăшăн тав тăваççĕ. Çав кĕнекесене вуласа эпир, хамăр патриотсемпе геройсем çинчен пĕлтĕмĕр, вĕсен ĕçĕсем пире çапăçура хаюлă тата паттăр пулма хавхалантараççĕ, тесе пĕлтереççĕ. Фронтовиксем тылри ĕçсынисене фронт умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртсе пыма чĕнеççĕ.

Ют çĕршывсенче

Америкăри поляксем Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Костюшко Карчмаржик ячĕпе тăракан Лигăн руководителĕ декабрĕн 12-мĕшĕнче Детройтра «Мичиган штатĕнчи славянсен конгресĕ» пухнă митингра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Америкăри реакционерсем, Польша чиккисем тĕлĕшпе ыйту тăнипе усă курса, Матушевский пек поляк реакционерĕсем урлă тата Польша посольствипе Польша консульствисем урлă США-ра фашизм майлă шухăшсем сараççĕ.

Чикаго университетĕнчи паллă поляк профессорĕ Ланге Детройтра тухакан «Глос людовы» хаçатра статья пичетлесе кăларнă. Унта вăл поляксен демократиллĕ ушкăнĕсене Польшăн çĕнĕ правительствине тума чĕнет.

Ланге çапла çырать: Мускаври конференци Совет Союзĕпе Польшăна пĕр-пĕринпе çĕнĕрен çыхăнма май тупса пачĕ, анчах поляк халăхĕн пуласлăхне поляксен демократийĕ çеç татса пама пултарать. Поляксен демократийĕ халĕ икĕ тĕп ушкăна пайланса тăрать. Совет Союзĕнчи поляк патриочĕсен союзĕ тата Англипе США-ри поляк демократĕсен ушкăнĕ. Ланге çав икĕ ушкăна пĕрлешме тата Польшăн çĕнĕ вăхăтлăх правительствине суйласа лартма чĕнет. Польшăн çĕнĕ правительствин тĕллевĕсем çаксем пулмалла: Польшăра реакционерсене влаçа çĕнĕрен хăйсен аллине çавăрса илме памалла мар, поляксен халăх партийĕн программине пурнăçласа пымалла (çав программа вăл поляк патриочĕсен союзĕн программи пекех), Польшăна ирĕке кăларас тесе Хĕрлĕ Çарпа çыхăнса кĕрешмелле, Польшăн политикине Тегеранри, Каирти тата Мускаври декларацисемпе килĕштерсе пымалла, Совет Союзĕпе Чехословаки тунă союз çумне хутшăнмалла тата Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи чиккĕсем тĕлĕшпе пыракан тавлашăва татса памалла. «Хĕрлĕ Çар Варшавăна пырса кĕнĕ вăхăтрах Польшăн çĕнĕ правительствине туса хумалла. Çав правительствăн членĕсенчен сахалтан та çурри Польшăна Германия оккупациленĕ хыççăн Польшăрах юлнă çынсенчен тăмалла», тесе çырать Ланге.

Нью-Йоркри литовецсен митингĕ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Литовецсен демократиллĕ организацийĕсен наци совечĕ митинг пухнă. Çав митингра 800 делегат-литовец пулнă, вĕсем литовецсен 75.000 члена пĕрлештерсе тăракан 180 организацийĕнчен—культура организацийĕсемпе ытти организацисенчен пынă. Делегатсем Мускаври, Каирти тата Тегеранри конференцисен решенийĕсене пĕтĕмпех хапăл туни çинчен калакан резолюци йышăннă.

Митингра пулнă çынсем Хэлла телеграмма янă. Çав телеграммăра вĕсем фашистла йĕркесен Литварри, Латвири тата Эстонири представителĕсене Америка правительстви ан йышăнтăр, тесе ыйтнă. Мĕншĕн тесен, тенĕ вĕсем, «çапла тунине ирĕклĕхе юратакан мĕнпур литовецсем, латышсем тата эстонецсем ырласси не тата çавăн пек туни США-па пирĕн паттăр союзник пулса тăракан Совет Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусене çирĕплетмелли утăм пулса тăрассине эпир хытă шанса тăратпăр», тенĕ.

БРОЗ-ТИТО ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ ЮГОСЛАВИН КАИРТИ ПРАВИТЕЛЬСТВИПЕ КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Паян каçхине Каирта официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Тито делегацийĕ Каирта, вăл союзниксемпе тата Югослави правительствипе калаçать».

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, унта çакăн пек декларации пичетлесе кăларнă:

«Александрире нумаях пулмасть Югославири партизансен вăйĕсен представителĕсем Британин вăрçакан вăйĕсен представителĕсемпе калаçнă. Çав калаçусем Англи правительствин Югославире тăшмана хирĕç тăракан мĕнпур вăйсене çар тĕлĕшпе пулăшмалли çинчен калакан политикине пурнăçа кĕртессипе çыхăнса тăнă. Пĕрлешÿллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсем те çав калаçусене хутшăннă. Маларах кăтартнă политикăна пурнăçа кĕртес ыйтусем тĕлĕшпе пĕтĕмпех калаçса татăлнă.

АМЕРИКĂПА АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ ХАРЬКОВРИ ПРОЦЕСС ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Харьковри процесс çинчен тата гитлерла преступниксене çакса вĕлерни çинчен пĕлтернисене курăнмалла вырăнта пичетлеççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Харьковран çапла пĕлтерет: Харьковра йышăннă приговор «союзниксем çирĕп политика тытнин пуçламĕш результачĕ пулса тăрать, çав политика вăрçă преступникĕсене наказани пама хушать, ăна ноябрĕн 1-мĕшĕнче Сталин, Черчилль тата Рузвельт йышăннă».

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Мĕнпур хаçатсем, çавăн пекех тата Британин радио саракан компанийĕ Гитлер ответлă пулса тăнине судра кăтартса панă, теççĕ.

«Санди экспресс» хаçат çапла çырать: Харьковри процесра айăпланакансем каласа пани этемлĕх нравственноçĕ мĕн чухлĕ пăсăлма пултарнинчен те иртсе каять, тет.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРА ФЛАНДЕНА, ПЕЙРУТОНА ТАТА БУАССОНА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет хушнипе Францире премьер-министр пулнă Пьер Этьен Фландена, Алжирта губернатор пулнă Марсель Пейрутона тата Францин Хĕвеланăç Африкинче генерал-губернатор пулнă Пьер Буассона тытса хупнă. Вĕсене пурне те Алжирти çар тĕрмине хупнă. Халиччен вĕсем килте арестленнĕ шутланса пурăннă.

Вăрçă хирĕнчен килнĕ çырусем

1. Мухтав орденĕн кавалерĕ

Паян эпир боецсемпе офицерсен çĕнĕ ушкăнне наградăсем пани çинчен приказ вуларăмăр. Правительство наградине илме тивĕçлĕ пулнисем хушшинче пирĕн земляк Трофим Максимович Алехин та пур. Ăна III-мĕш степень Мухтав орденĕ панă.

Виçĕ орден кавалерĕ пулчĕ ĕнтĕ Алехин. Кăçал ăна Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степень орденĕ тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ панă. Иртнĕ çулта вăл «За отвагу» медаль илнĕччĕ.

Трофим Алехин вăйлă та хĕрÿллĕ çапăçусенче пулни çинчен ним хумханмасăр, пĕр мухтанмасăр, ялан пулакан ĕç çинчен каланă пек каласа парать. Çĕршыв тăшманĕсемпе вăл граждан вăрçи хирĕнче те çапăçнă. Халĕ автомат, винтовка, пулемет чĕлхипе калаçать Алехин нимĕçсемпе.

— Алехин ним сас-чĕвсĕр çухалнă,—тесе пĕлтерчĕ мана пĕрре манăн çывăх тусăм, капитан Крючков.

Икĕ талăк хушши çапăçу хирĕнчен тухмасăр, панă приказа пурнăçа кĕртсе пурăннă иккен вăл çав вăхăтра.

— Пĕрре çапăçăва кĕрсе кайрăмăр та,—каласа парать кайран Трофим Максимович,—ĕç тупăнсах пычĕ. Çиме-ĕçме те, выртса канма та вăхăт пулмарĕ...

...Чăваш çынни Трофим Алехин, туркмен Мали-Кули Шадыев тата вырăссем Губинпа Фибрин юлташсем танк бронĕ çинче ларса пынă. Вĕсем танксене тăшман минисем çине кĕрсе каясран асăрхаттарса пынă. Танк йĕри-тавра снарядсем ÿке-ÿке çурăлнă. Тăшманăн пулемечĕсем вăйлă ĕçленĕ.

Алехин танк çинчен сиксе аннă та, пулясем шăхăра-шăхăра иртнине пăхмасăр, нимĕçсен траншейи патне чупса кайнă. Пулеметпа пĕрсе выртакан икĕ гитлеровец патне йăпшăнса пырса, иккĕшне те тыткăна илнĕ.

Çак çапăçура хастарлăн та хаюлăн çапăçнăшăн ĕнтĕ Алехин юлташа Мухтав орденĕ панă.

Трофим Максимович Алехин халĕ те, эпир малалла куçса пынă вăхăтра, хăйĕн ĕçне питĕ ăнăçлăн туса пырать. Вăл хамăр боецсене нимĕçсен минисенчен сыхласа пырать, боецсемпе пĕрле пырса, çул çинче е вăрманта тĕл пулакан минăсен взрывателĕсене кăларать.

Ефрейтор Алехин тата тăшманăн вут-хĕмĕ айĕнче сахал мар кĕпересем хывнă. Вăл хамăр оборонăн малти линийĕнче çур пăт туртакан минăсене питех те меллĕ ларта-ларта тухнă. Халĕ эпир малалла куçса, çĕршыва тăшмансенчен тасатса пыратпăр. Çĕнтерÿсем ефрейтора хавхалантараççĕ. Днепр шывĕ урлă каçнă вăхăтра, пĕр каçхине, вăл килĕпе вунçичĕ хут каллĕ-маллĕ хутланă. Эпир халĕ Днепр геройĕсен ячĕсене асăннă чухне ефрейтор Алехин юлташа та аса илетпĕр.

Вăл нимĕçсене пĕрре те канлĕх памасть. Вăл яланах тăшманпа тĕл пулма тата ăна пĕтерсе тăкма тăрăшать. Çак çул çурă хушшинче вăл виçĕ хут аманнă. Кашни хутĕнче суран тÿрленсе çитиччĕнех хăйĕн батальонне таврăннă.

Трофим Максимович Алехинăн икĕ ывăлĕ—Алексейпе Вячеслав та фронтра çапăçаççĕ.

Пирĕн земляк, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Макаç çынни, ефрейтор Трофим Максимович Алехинăн паттăрла ĕçĕсемпе эпир мухтанса савăнатпăр.

Капитан Т. МАЙОРОВ.

2. Ашшĕпе ывăлĕ

1942-мĕш çулхи кĕркунне Атăл таврашĕнче этем ăс-хакăлĕ виçейми аслă кĕрешÿ пычĕ. Сталинград паттăрĕсем вут-çулăм айĕнче урамсене нимĕçсенчен тасатса пычĕç. Кашни малалла ярса пуснă утăм пирĕн чĕрене савăнтарса тăчĕ.

Тимруксен Миккулĕ çав кĕрешÿре пулеметчик пулнă. Кун иртмессерен вăл нимĕçсен ретне сайратнă. Çапăçса пиçĕхнĕ фронтовика часах командира кăларнă. Унтан вара вăл взвод командирĕ пулса тăнă.

Миккуль кĕçех офицера тухнă. Пултарулăхне кура правительство ăна икĕ орден панă. Миккуль ун çинчен Улхашра пурăнакан тăван ашшĕ-амăшне çырса пĕлтернĕ.

Тăван кил-йышĕ Миккуль чапа тухнă тенĕ хыпара темĕн пек хĕпĕртесе пĕлнĕ. Ун ячĕпе така пусса ĕçкĕ ирттернĕ. Тимрук пичче, иртнĕ вăрçăра сатур салтак пулнăскер, чăтса тăрайман. Кăкăрĕ çине икĕ «Георгине» çакса, çыру илнĕ кунах райвоенкомата кайса, хăй тĕлне пулнă дежурнăя рапортланă:

— Гренадер Преображенского полка Владимир Андросов. Ходатайствует послать на фронт, немца бить!

Гренадерпа калаçмашкăн дежурнăйăн чĕлхи çаврăнман. Хĕпĕртенĕ салтакăн ĕмĕтне татас мар тесе, вăл Тимрук пиччене комиссар патне кĕме ирĕк панă.

— Нимĕçсемпе çапăçнă тетĕн? —ыйтнă военком.

— Так точно, товарищ военком.

— Халĕ фронта каяс тетĕн-и?

— Так точно!

— Нимĕçсене турасшăн эппин?

— Рад стараться!.. — рапортланă Тимрук пичче.

Гренадер хăйĕн сăмахне улăштарма юратман. Каланă—тунă. «Дисциплинăра, тăванăм»—тенĕ вăл часах. Пĕр-икĕ уйăх вĕреннĕ хыççăн, Тимрук пичче çапла пĕрле фронта çитнĕ.

Хĕрлĕ Çар ун чухне нимĕçсене Çурçĕр Донец шывĕ çинчен сирпĕтсе, хĕвеланăç еннелле хăваласа кайнă. Тимрук фронт патнелле васканă, фронт унтан аяккалла кайнă. Вара вĕсем пĕр хула патне çитсе чарăннă та татах пĕр-икĕ уйăх хушши вĕреннĕ. Шăпах тырпул пиçсе çитнĕ вăхăтра Тимрук пичче сержанта вĕренсе тухнă.

Фронта тухса каяс каçхине кĕçĕн командирсем патне офицерсем пынă. Вĕсем хушшинче пĕр çамрăк капитан пулнă. Андросов сержантăн чĕри, кăкăрĕнчен тапса тухас пек, сикме пуçланă. Хăйне хăй ĕненмесĕр, куçĕсене шăлкаласа илнĕ вăл. «Вăлах, тем тесен те вăлах!» тесе мăкăртатнă старик хăй ăшĕнче.

Часах ятсем тăрăх тĕрĕслеме тытăннă. Тăван ашшĕ ятне илтнĕ çамрăк капитан тĕлĕнсе пăхкаласа илнĕ. Андросов сержант кĕçĕн командирсен хушшинчен çирĕп пусăмпа утса пырса, çамрăк капитана хăй пурри çинчен пĕлтернĕ. Унтан вара иккĕшĕ те ыталанса пĕрне-пĕри чуп тунă та, сержант пурин çинелле те çаврăнса:

— Пĕр çул халĕ пирĕн пурсăмăрăн та, нимĕçе пĕтермелле!—тенĕ.

Батальон часах хĕвеланăç еннелле çул тытнă.

Капитан Н. ИЛЬБЕКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 25-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитаторсемпе беседчиксем валли ушкăвлă консультаци пулать. Тема: „Совет çыннисен юнĕпе куççуллишĕн Гитлерăн палачĕсене вĕлерер, тавăрар" (Харьковри суд процесĕн материалĕсем тăрăх).

Консультацие Д. М. Ляшко юлташ ирттерет.

ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн
заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкар леспромхозĕ граждансемпе учрежденисене çакăн çинчен пĕлтерет: вутă илмелли нарядсене 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен çырса параççĕ.

1943-мĕш çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа Атăлăн ку енчи складран вутă кашни кунах (канмалли кунсемсĕр пуçне) ирхине 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен параççĕ.

ШУПАШКАР ЛЕСПРОМХОЗĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1175 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз.